1358 32-171

Н. МРАНЬКОВ

# ПЁРРЕМЁШ КАТТЕКОРИ

ЂĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИ
Шупашкар ★ 1932

Н. МРАНЬКОВ

# ПĔРРЕМĔШ КАТТЕКОРИ

4 пайлă 5 карттинлă комети

ÇĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИ
Шупашкар * 1932

## ВЫЉАКАНСЕМ:

1. **Тит Титтăђ**—35—40 çулта, уђрештени пуçлăхĕ.
2. **Карп Карпăђ**—30 çулта, çекреттар.
3. **Маруççă**—25 çулта, машшинисткă.
4. **Паљук**—27 çулта, теловот.
5. **Сахйе**—25 çулта, урай тасатаканĕ.
6. **Лариван**—27 çулта, вытвишентсă.
7. **Йал хресђенĕ**—50—60 çулта.
8. **Орхутка Уртемйăђ**—35—40 çулта.

**Вăйăра тасату комиççи тата ытти çынсем те пулаççĕ.**

---

Уполн. Главл. В-12666 Заказ № 6406 Тираж 1000 экз.

17-я типография УПП ОГИЗ'а. Москва, Шлюзовая наб., 10.

# 1-МĔШ ПАИĔ.

Стсенă:

Уђрештенинђе. Уђрештенинђе ĕçлекенсем ваљљи сĕтелсем, тенкелсем пур. Çтена çумĕнђе кашни ĕçлекенĕн сĕтеле тĕлĕнђе камне палăртса çырса çапни пур. Уђрештени пуçлăхĕ уйрăм ђăланра лараť, стсенă йеннелле уçă. Кăнђелертен кĕмелли алăк пур. Тухса çӳремелли алăксăр пуçне, урайне тасатакан ђăланне кĕрсе каймалли алăк пур. Çтена çумĕнђе тĕрлĕ плаккатсем, тиакрамсем, çулпуççен сăнĕсем çакăнса тăраççĕ. Уђрештени пуçлăхĕ патне кĕрекен алăкĕ çинђе „без доклада не входить", тесе çырса çапса хуни пур. Çтена умĕнђе сехет çакăнса тăраť.

## 1-МĔШ КУРĂННИ .

Ђаршав уçăлсанах стсенă çинђе никам та çук. Вăхăт 9 сехет çитесси инçех мар. Пăртак тăрсан хăй ђăланĕнђен анасласа, каркаланса Сахйе тухаť. Аллинђе тутăр татăкĕ пур. Сехет çине пырса пăхаť.

**Сахйе.** Тăхăр сехет çитесси инçех мар (анаслаť), нумайтарах çывăрса кайнă. Шуйттан Çумккине каçах тухса кай тесе хăвалатăп та, пĕр кĕртсен кайасса пĕлетиха. Кĕртмесен—кĕртмес тесе йатлаçаť, кĕртсен—тухса каймасăр ăнран йараť. Урайне пайан шăлмасан та йураť, сĕтелсене сăтăркалам та акă, йурĕ. (Сĕтелсене шăлкалаť,

анаслаť). Ыйхи çитмен те, каç çаплах аван иртрě. Кěçěр татах килсен те кěртес пуљ. Çумкка тени хǎй те питě маттур та, кěртмесен те ђǎтайрас çук çав. Çӳçěсем кǎтра, сǎмси пǎртак курпунлǎрах та, пысǎк! Куçě тесен ђǎпђакǎр, кушак куçě пек йǎлтǎртатаť. Çисе йарас пек пǎхаť вара. Ђуптума пуçласан антǎхтарсах йараť. Ыталаса илсен...

## 2-МĚШ КУРǍННИ.

Сахйе хǎй тěллěн калаçса тǎнǎ хушǎра Паљук кěрсе итлесе тǎраť.

**Паљук** (кулса йараť). Ха-ха-ха! ха-ха-ха!

**Сахйе** (шарт сиксе). Атте! пěтрě пуç! (васкаса ěçе тытǎнаť. Хǎй тěллěн) Ах, шуйттан, пěтěмпех илтнě пулě вǎл?

**Паљук** (каçса кайса кулаť). Ыталаса илсен мěн вара? Ха-ха-ха!

**Сахйе.** Мěн кулан? Мěн кулмалли пур унта?

**Паљук.** Антǎхтарсах йараťи? Ха-ха-ха!

**Сахйе.** Манран питех ан кул. Каçхине ху та атǎл хěрринђе пылђǎк çинђе шапа пек йǎвалантǎн!

**Паљук** (кулма ђаранса Сахйе патне пыраť). Есě куртǎни вара?

**Сахйе.** Сана курмасан суккǎр пулас пулаť. Паљукпа пылђǎкǎн йађě иккěшě те пěр майлах (кулаť).

**Паљук.** Çитет, çǎварна карма ђарǎн ěнтě. Епě те илтмен, есě те курман пултǎр! (сěтел хушшине пырса лараť).

**Сахйе.** Паçǎрах çапла каламалла! Атту пуçланǎ манран кулма виш! Ťфу (сураť) хǎвǎнтан ан кулђǎр, асту! (Ђǎлана кěрсе кайаť).

**Паҫук** (хыҫалтан). Ҫитĕ, ан йатлаҫ ĕнтĕ. Шуй тунине те пĕлмес ҫав.

## 3-МĔШ КУРĂННИ.

Паҫук пĕҫҫенех. Хутсем, кĕнекесем кăларса хурай, вулай.

**Паҫук** (сехет ҫинелле пăхса). Ха, ҫирĕм минут анҫах иртнĕ. Епĕ ухмахваскатăп, ыттисем ҫитрĕҫ пулĕ тесе. Кăна пĕлнĕ пулсан тата пăртак каннă пулăттăм. Вăхăт пурҫҫĕ (хут илсе вулай). Халăх Комиссарĕсен Канашĕ, районсене хушмалла. Ей вăхăт пулĕха! Мансан тепĕр хут та астутарĕҫ. Кăҫал туса пĕтерейменнине, ҫитес ҫулра та туса пĕтерĕҫ! (иле-иле папкăсем ăшнелле ҫикет. Хăшне-пĕрне ҫăмăртаса курҫинкка ҫине пăрахай). К делу, к делу! Ҫук, ĕҫлеме пултараймастăп! Пуҫ ыратай.

## 4-МĔШ КУРĂННИ.

Паҫук пуҫне тытса ларай. Алăкран йăпăртатса Маруҫҫă кĕрет. Паҫук ҫине пăхмасăр сĕтел хушшине, машшинă умне пырса ларай.

**Маруҫҫă** (сумккинҫен путрăсем кăларса питне сĕрет). Фу! ывăнтăм. Урамра ҫӳремелле мар пылҫăк. Ĕнер илнĕ пушмака варларăм. Песопраҫи какой!

**Паҫук.** А, Маруҫҫă килнĕ, страствуй Маруҫҫă! Мĕнле пурнан?

**Маруҫҫă** (виртлесе). Страствуй Паҫҫу! Анҫах ман пурăнни сана пĕртте кирлĕ мар, ҫавăнпа ыйтмалли те ҫук!

**Паҫук.** Пуҫлăхне илĕртнĕренпе, ытла та питĕ ҫапланса кайрăн есĕ, Маруҫҫă. Хăвăн ĕлĕкхи йулташна та манса кайрăн.

**Маруççă.** Ну, ђтошă? Пулă çук вăхăтра рак та йуранă пулнă, халĕ пуллийех лекрĕ. Тем тăвас ман санпала, çумăнта виçĕ пус укçу нихăçан та çук.

**Паљук** (Маруççă патне пырса). Маруççă! Анђах йурататăпçке епĕ сана! (аллисене кăкри çине хывса). Ман шухăш йаланах санпа пĕрле. Сан куçусем, сăн-сăпату, йаланах ман куç умĕнђе. Çĕрĕн-кунĕ сан çинђен анђах шухăш! Ман сана йуратни, акă кунта, ђĕрере! Ăшра! Суйине мар, тĕрĕссине калап!

**Маруççă** (кулаť). Ха-ха-ха! Йуратни, ђĕрере-ăшра! Ха-ха-ха!

**Паљук.** Кулан, епĕ калани, сана йуратни кулăшла еппин? Анђах ĕлĕк пĕртте кулмастăнђĕçке!

**Маруççă** (шăртланса). К ђортту! К ђортту, сан йуратнине! Сан йуратнипе кĕрĕк çĕлесе тăхăнмалла мар. Епĕ маттериалис. Кам ытларах параť, çавна йуратап, илтрĕни?

## 5-МĔШ КУРĂННИ.

Ç а в с е м е х, К а р п к ĕ р е т. Т а л к ă ш с а с ĕ т е л х у ш ш и н е к а й с а л а р а ť. М а р у ç ç ă К а р п к ĕ н и н е к у р с а н ĕ ç л е м е т а п р а т а ť.

**Паљук** (Карп кĕнине курса). Маруççă, ĕнерхи хута пиђетлерĕни?

**Маруççă** (хут илсе парса)... Пиђетленĕ, акă ме!..

**Карп** (сехет çине пăхса). Ух, ир çитрĕм пулĕ тесе хăранăђђĕ. Вăхăтлах çитнĕ, вунă сехет çитесси инçех мар. Паљук! Пуçлăхне памалла хутсене парха мана!

**Паљук.** Халех паратăп (илсе пырса параť). Кирлĕ пулĕ тесе васкасах хатĕрлесе хутăмăр Маруççăпа.

**Карп** (вуласа пăхса). Ăçта кунта сан штамп? Мĕншĕн штамп хумарăн?

**Паљук.** Астуман, кайран та хывăпăр Карп Карпăђ!

**Карп.** Мĕн мана вĕрентен?! Ёпĕ çекреттар! Али çук?!

**Паљук.** Есĕ, есĕ Карп Карпăђ! Халех штамп хыват-тăм, манса кайнă, ĕç нумаййипе! (васкаса хăйĕн сĕтелĕ патне пырса штамп çапаť).

**Карп.** Ђорт снайет што... Штамп хумасăр алпусма хут параççĕ!

**Паљук** (васкаса илсе пырса параť). Коттовă, котто-вă! Карп Карпăђ!

**Карп** (вуласа пăхаť). Мĕншĕн кунта сапйаттуй ларт-ман? Кунта акă пăнђă лартмасăр хăварнă! Мĕншĕн кун-та пĕр саспаллине лартмасăр сиктерсе хăварнă?!

**Паљук.** Карп Карпăђ, епĕ çырнăђђĕ! Маруççă сик-терсе хăварнă пулмалла. Халĕ лартса пырсан та ним те пулмасť.

**Карп.** Мĕн мана вĕрентсе тăран. Епĕ çекреттар, али есĕ?!..

**Паљук.** Есĕ, Карп Карпăђ, есĕ!

**Карп.** Перепписаť, и пољшшĕ никаких!

**Паљук.** Çиђђас, çиђђас, Карп Карпăђ (васкаса сĕтел хушшине ларса çыраť, çырса пĕтерсен Маруççă патне пыраť) .

**Карп.** Пошĕ мой. Хăçан вĕренсе çитĕ ку çын? Пайан калавă ĕçе ыран каллех манса кайаť.

**Паљук.** Маруççă, пиђетлесе парха ђасрах, питĕ кирлĕ хут ку.

**Маруççă** (хута илсе, ывăтса йараť). Мана мĕн ĕç, ма-нăн саветуйушђи ваљђи токлат пиђетлемелле.

**Карп.** Пулаťи сан пайан Паљук?

**Паљук.** Карп Карпăђ, ман пулнă та, анђах Маруççă пиђетлемест. Токлат пиђетлетĕп, тет.

**Карп** (йăпăлтатса). Товаришђ Маруççă, пиђетлесе пар. Ку хут та пуçлăх ваљљи. Будьте добры пожалуйста!

**Маруççă.** Кӳр еппин ђасрах, пиђетлесе парам (илсе пиђетлет). Акă ме, пулђĕ!

**Паљук** (Маруççă аллинђен илсе, васкаса Карпа парать). Тођкă в тођкă аптекри пек Карп Карпăђ! Епĕ тесен пултараймастăпи вара!

**Карп** (хута илсе пăхать). Каллех штамп хуман! Сан пуçна улăм тултарни? Пĕр ĕç çинђен миçе хут каламалла сана?!

**Паљук.** Виноват, Карп Карпăђ! Туххăмра хушнă пек туса парап! (васкаса штамп хурса парать).

**Карп.** Кашни кунах çапла ту, ан ман!

**Паљук.** Манмастăп, Карп Карпăђ! Малалла есĕ каланă пек пулать (хăй вырăнне кайса ларать).

**Карп.** Çапла кала, кăшман пуç!

**Паљук.** Çук, пуç ĕçлейми пулђĕ. Ухмаха тухса кайап пуљ ĕнтĕ. (Хутсене иле-иле пăрахать). К делу! К делу!

## 6-МĔШ КУРĂННИ.

Çавсемех, пуçлăхĕ кĕрет. Пурте ĕçе тытăнаççĕ. Маруççă патне çитсен ђарăнса тăрать.

**Тит.** Страствуй, Маруççă, мĕнле кăмăлсем? (ал тытать).

**Маруççă.** Пит аванха, Тит Титтăђ!

**Тит.** Кăмăл аван пулсан, пурăнма май пур вара. Йурать, йурать. (Хăй вырăнне кĕрсе ларать. Телефонпа шăнкăртаттараççĕ). Алло! Тит Титтăђ! Сторовă, сторовă. Хатĕр, хатĕр! Сывă пул (телефон трупкине пăрахса).

Хатӗр, йухса выртакан ҫӑл шывӗ пек токлат туса парам. Карп Карпӑђ, ӗнерхи хута парӑрха мана!

**Карп.** Ҫиђђас, ҫиђђас Тит Титтӑђ! (васкаса пырса хута паратˇ). Аккуратнӑ, тођкӑ в тођкӑ аптекри пекех, пӗр тођкине сиктермесӗр, пӗр сӑпйаттуйне сиктермесӗр ҫырнӑ. Штампне те хывнӑ.

**Тит** (хута пӑхкаласа) Номӗрӗ ӑҫта?! Номӗрӗ ӑҫта?!

**Карп.** Номӗрӗ? Номӗрне лартма астуман? Тит Титтӑђ! Кайран лартӑпӑр! Паљу ҫырмасӑр хӑварнӑ...

**Тит.** Молђатˇ! Мана хирӗҫ калаҫма, есӗ пуҫлӑхӗ, али епӗ?!..

**Карп.** Есӗ, есӗ Тит Титтӑђ! ҫырса паратӑп! (васкаса хӑй сӗтелӗ хушшине кайса ларса ҫыратˇ).

**Тит.** Ухмаха тухма пулатˇ капла! Хут ҫине номӗрне каламасӑр лартма пултараймаҫҫӗ. Ех, ӗлӗкехђӗ ҫав пурнӑҫ. Латтӑк-лат, латлӑ мар тӑк—хӑваланӑ та йанӑ.

**Карп.** Сурӑх пуҫ, номӗрне лартса паман. Саншӑн мана хӗрелме лекет! Ҫыр ђасрах! Ых-х, кӑтартӑпха сана!

**Паљук.** Хушнӑ пулсан ҫыраттӑм, ху хушмарӑн (ҫырса паратˇ).

**Тит.** Карп Карппӑђ, пулђи сан унта?

**Карп.** Пулђӗ, пулђӗ! (хута Тит патне илсе пырса паратˇ). Мӗнле кирлӗ ҫапла тунӑ. Нумӗрӗ те коттовӑ!

**Тит** (хута пӑхкаласа). Ђысли ӑҫта?! ђыслине мӗншӗн лартман.

**Карп.** Ђысли? Ђыслине астуман! Ҫырса хӑвар хӑвах Тит Титтӑђ, али алпуссан кайран лартатӑп.

**Тит.** Молђатˇ. Мана вӗрентме, есӗ пуҫлӑхӗ, али епӗ?!

**Карп**. Есӗ, есӗ, Тит Титтӑђ! Халех ҫырса паратӑп (васкаса хӑй сӗтелӗ хушшине кайса ларса ҫыратˇ).

**Тит.** Хоспоти пошă мой! Хăçан ĕçе ĕлĕкхи пек туса пыма вĕрентсе çитерес кăсене? Пĕр хута та кирлĕ пек çыраймаççĕ.

**Карп** (хута илсе пырса Тита парать). Номĕрĕ те пур, ђыслине те лартнă ĕнтĕ. Тођкă в тођкă аптекри пекех.

**Тит** (пăхкаласа). Вот капла ĕлĕкхи... кăххăм... манирлĕ, манирлĕ ĕнтĕ, ал пусма та йурать (ал пусать). Çакăн пек ĕçлесен мухтама та йурать.

**Карп.** Кирек хăçан та хатĕр есĕр хушнине тума!

**Тит.** Йарăр ку хута ђасрах, ме!

**Карп.** Çиђђас пулать! (хута Паљу патне илсе пырса) Мăклă пуç çавăнта та ђыслине лартса пама пултарайман.

**Паљук.** Хушмарăн ху, хушнă пулсан лартса параттăм.

**Карп.** Йар ђасрах, тивĕçлĕ çĕре! (хăй вырăнне кайса ларать).

**Паљук.** Йурать! кирлĕ пулсан астутарĕçха! К делу! (папкă ăшне ђикет).

## 7-МĔШ КУРĂННИ.

Çавсемех, йал хресђенĕ кĕрет. Маруççă патне пырать. Тит хăй ђăланĕнђи сĕтел арђинђен картăђкă кăларса пăхкаласа ларать. Хăй тĕллĕн савăнать. „Ех, çамрăк—çамрăках çав“, тесе калаçкаласа ларать.

**Хресђен.** Ман ыйтса пĕлмелли пурђђĕ те, такăшĕнђен ыйтса пĕлес? Сайавлени те ак кунтах, пăхса парха? (хут тыттарма хăтланать).

**Маруççă** (пĕр сăмах шарламасăр Паљук çине кăтартать).

**Хресђен** (Паљук патне пырса). Йулташ, ман сайавленипе ыйтса пĕлмелли пурђђĕ... Налук ман çине хыв-

ни тӗрӗс мар. Пӑхса парха, пушалстӑ. (Хута Паљука тыттарать).

**Паљук** (хута илсе пӑхать, шарламасӑр Карп ҫинелле тӗллесе кӑтартать).

**Хресђен** (Карп патне пырса). Йулташ, ман ҫак сайавленипе ыйтса пӗлмелли пурђђӗ. Налук ман ҫине хуни тӗрӗс мар. Пӑхса парха, пушалстӑ?

**Карп.** (хутне вуласа пӑхать). Ыран кил. Хӑвӑн килме вӑхӑт пулмасан ху урӑх килсе те ан ҫӳре. Пӑхса тухса ответне килнех йарӑпӑр. Кай та килне кӗтсе пурӑн.

**Хресђен.** Ара йулташ, кӗтсе кӗтӗк пултӑм ӗнтӗ. Виҫӗ уйӑхранпа кӗтсе пурӑнтӑм халђ те, ҫитет.

**Карп.** Пултараймастпӑр, пултараймастпӑр! Ӗҫ питӗ нумай!

**Хресђен.** Капла пулмасть сирӗнпе, пуҫлӑхӗ патне кӗрсе калаҫам-ха.

**Карп.** Старик, йурамасть пуҫлӑх патне кӗме!

**Хресђен.** Сирӗн йураманнине пӑхса тӑрса ӗҫ тухмасть (талкӑшса кӗрсе кайать. Тит карттӑђкӑ ҫине пӑхса ларнине курса ђарӑнса, пӑхса тӑрать).

**Карп.** Ей, старик, йурамасть!

**Тит.** Иртет мӗн ҫамрӑк ӗмӗр. Епӗ те ҫавӑн пекех ҫамрӑк пулнӑ-ҫке (карттӑђкӑна ђуптӑвать).

**Хресђен.** Кӑхӑм, кӑхӑм! с-с-с!

**Тит.** (Сасартӑк сиксе тӑрать). Кам пур кунта?!.

**Хресђен.** Епӗ йулташ? Ыйтупа килтӗм сан патна!

**Тит.** Кам хушнӑ сана ыйтмасӑр кӗме?! Кам хушнӑ, кам?!

**Хресђен.** Йулташ пуҫлӑх, ӗҫ пит пысӑк та ҫавӑнпа ыйтмасӑрах кӗтӗм. Каҫар кансӗрлерӗм пулсан сана ӗҫ тума!

**Тит.** Карп Карппӑђ! Кар Карппӑђ!

**Карп.** Епĕ, Тит Титтăђ, мĕн кирлĕ? (Тит патне пырать).

**Тит.** Мĕнле майпа лекнĕ ку çын ман патна? Кам хушнă ăна систермесĕр ман патна кĕме?!.. Мĕн пăхса ларан есĕ?!

**Карп.** Ђараймарăм, Тит Титтăђ! çиломах кĕрсе кайрĕ!

**Хресђен.** Акă ман сайавлени пур сирĕн патра, вуласа пăхса татса парха!

**Тит.** Тухса кай, тухса кай! Пĕр сайавленине те йышăнмастăп. Ĕçлĕ çынна ђăрмантарса çÿрен. Малтан акă çак çынпа калаç. Вара ман патна кĕме пултарăн. Карп Карппăђ ыйтмасăр ман патне çын кĕртнĕшĕн, сана пайан выкăвăр паратăп!

**Карп**. Айта, айта старик. Хамах пăхса парăп (илсе тухса кайать. Хăй сĕтелĕ хушшине ларать).

**Хресђен.** Тахçанах çапла каламалла. Маншăн кирек кам пăхса парсан та çавах. Акă ме, вуласа пăх (хутне парать).

**Карп.** Малтан, ав çав çын патне кайса сайавленине шурнал çине кÿрттерха. Вара калаçăпăр.

**Хресђен** (Паљука кайса парать). Сайавленине шурнал çине ÿкермелле терĕ.

**Паљук** (хута илсе пăхать). Ресољутси çук кунта, ресољутси кайса çыртарха çекреттар патне.

**Хресђен** (Карп патне пырса). Ресољутси хывмалла тери мĕн тата?

**Карп.** Епĕ çынсене нумайах муталаса çÿреттерместĕп. Туххăм çеç ресољутси çырса паратăп (çырать), ме, шурнал çине кайса ÿкерттер ĕнтĕ.

**Хресђен** (Паљук патне пырса). Ресољутси пур, шурнал çине ÿкерсе пар ђасрах.

**Паҫук.** Маншăн ĕç ҫаранса тăмасť. Ресоҫутси пулсан шурнал ҫине ўкересси нимех те мар вăл (ҫырса парať). Акă, ме, пулҫĕ.

**Хресҫен** (ҫекреттар патне пырať). Шурнал ҫине ўкернĕ, пăхса пар ĕнтĕ пушалстă.

**Карп** (хута пăхкаласа). Вхоťашҫи номĕр ҫук. Кайса ларттар, вхоťашҫи номĕр!

**Хресҫен.** Хăҫанҫҫен лăпăртататмалла сирĕнпе? Кайран лартма йурамасťи? Ман киле кайма васкамалла. Лаша та выҫă тăрať.

**Карп.** Лăпăртататпăр пулсан, ыран кил!

**Хресҫен.** Шалтах аптрамалла сирĕнпе (Паҫук патне пырса). Номĕрне лартман тет, лартса пар ҫасрах.

**Паҫук.** Хушсан туххăм ҫеç туса паратăп. Ман ҫинҫе ĕç ҫаранса тăмасť (ҫырса парať). Ме, кай ĕнтĕ!

**Хресҫен.** Урăх ҫырмалли пĕтрĕ пулмалла ĕнтĕ. Аранах ĕҫе туса кайатăп. (Карпа пырса парať). Пăхса пар ĕнтĕ йулташ, пурне те турăм пулмалла мĕн хушнине.

**Карп.** (хута пăхкаласа). Ҫысли ҫук, ҫысли! Ҫыслине кайса ларттарха, вара калаҫăпăр.

**Хресҫен.** Ара, мĕн айкашатăр есĕр. Неуштă ҫыслине хăвах лартма пултараймастăн есĕ?

**Карп.** Калаҫса вăхăта ан ирттер старик! Манран килмест, пуҫлăхран килет.

**Хресҫен.** Ťфу! (Паҫук патне пырса). Ҫыслине лартса пар шуйттан пуҫĕ. Каллĕ-маллĕ ҫўреттерсе ăнран йатăр.

**Паҫук.** Йатлаҫма йурамасť кунта старик! Пĕлетни есĕ кунта уҫрештенине? Милитси патне йарассине кĕтетни?

**Хресҫен.** Милитси? Мĕншĕн? Ытлашши калаҫрăм пулсан каҫар йулташ, тўсейменнипе калаҫрăм пулмалла. Лартса парха ҫасрах ҫыслине.

**Пађук.** Çапла калаç, йатлаçма йурамасӑ кунта! Хушнӑ йапална туса парасси нимех те мар (çыраӑ).

**Тит.** Маруççӑ! Токлатсем хатӗри! Кил халӗ ман пата!

**Маруççӑ.** Халех пыратӑп, Тит Титтӑђ. (Тит патне кӗрсе кайаӑ).

**Пађук.** Ме, кай ӗнтӗ, хурми йенђен пурте пулнӑ.

**Хресђен** (Карп патне пырса). Йулташ, пӑхса тух та ђасрах, пуçлӑхӗпе калаçас.

**Карп** (хута пӑхкаласа). Так-так! тођкӑ в тођкӑ аптекри пекех. Халӗ ӗнтӗ кӗтсе ларха!

**Хресђен.** Мӗнле кӗтсе лар?! Пурте пулнӑ, тата кӗтсе лармаллаиха? Çук, епӗ пуçлӑхӗ патне кайатӑп! (Кайма тӑраӑ).

**Карп.** Старик, йурамасӑ! Пуçлӑх патӗнђе çын пур.

**Хресђен.** Мӗн тӑвас тен, килнӗ йапалана кӗтсе пӑхмах лекет пулмалла( пӗр кӗтесселле кайса лараӑ). Йӑлтах тарӑхтарса çитерђӗç.

**Тит.** Мӗнле Маруççӑ пурнӑçсем? Пӗрте ман патне кӗрсе пӑхмастӑнçке есӗ?

**Маруççӑ.** Токлатне пиђетлесе пӗтернӗ епӗ, акӑ, ме Тит Титтӑђ!

**Тит.** Токлађӗ хӑйаматаха вӑл! Мӗнле, пушмак йурӑхлӑи? Урана ыраттармасӑи? (Тыткаласа пӑхаӑ).

**Маруççӑ.** Пушмакӗ йураӑ те, анђах...

**Тит.** Мӗнха тата, мӗн кирлӗ, мӗн хуйхӑран? (саваӑ).

**Маруççӑ.** Ах, ман йулташсем пурте пађттопа, шулккӑвӑй кӗпесемпе çӳреççӗ. Ман çеç çук, урама тухма та намӑс халӗ мана!

**Тит.** Ну, ну, уншӑн, хам пур ђухне куђђанмалли çук. Акӑ ме, ил мӗн кирлӗ çавна, Маруççӑ! (Укçа кӑларса параӑ).

**Маруççă.** Питĕ йуратап вĕт еп сана Тит Титăҫ!

**Тит.** Ах ты миленькая, хорошая, дорогая, (телефонпа шăнкăртаттараççĕ. Тит телефон трупкине тытса) Алло. Алло.

**Маруççă.** Сывă пул, Тит Титăҫ, тепре куриҫҫен, халĕ ҫăрмантармастăп епĕ сана. (Тита пуçĕнҫен ҫуптуса тухса кайаҭ).

**Тит** (Телефон трупкине алăран йамасăрах). Сывă пул, сывă пул Маруççă! Тоç? Ҭфу! Алло! Алло! Тит Титтăҫ! Хатĕр, хатĕр! (телефон трупкине хурса) Ух! савăнăçлă вăхăта ирĕккĕн ирттерме памаççĕ. Токлат, токлат! А, хĕр калама çук таса (кулаҭ). Отнаккă хатĕрленес пулаҭ. Кунта пулас çук хатĕрленесси, хваттере кайас пулҫ (пуçтарăнаҭ, хутсене портфĕл ăшне ҫикет).

**Хресҫен.** Хайхи çын тухрĕ, кĕме йурамалла ĕнтĕ!

**Карп.** Йураҭ, кĕрсе кай.

**Хресҫен** (Тит патне кĕрет). Йулташ, пуçлăхĕ, лаша çук, ĕне те çук, кунта çын лашипе килтĕм, çапах та ман çине налук хуҫĕç. Тĕрĕс мар, каçарăр пушалăстă. Акă сайавленине пăхса парăрха. Шурнал çине те кĕртнĕ, номĕрне, ҫыхвăрне те çырнă. Пăхса пар пушалăстă.

**Тит.** Вăхăт çук. Токлат тума хатĕрленмелле. Ман ун пек ĕçсемпе айкашса ларма вăхăт çук. Токлат тума хатĕрленмелле! Çекреттара парса хăвар.

**Хресҫен.** Мĕнле пулаҭ ку йапала? Темиçе сайавлени çыртăм, хам килтĕм, çаплах туса памастăр.

**Тит.** Тухса кай, тухса кай! Санпала калаçса тăма вăхăт çук халĕ ман!

**Хресҫен.** Пăхса парха пошалăстă. Йулташ, пуçлăхĕ!

**Тит** (хăтăрса пăрахаҭ). Тухса кай тесе каланă сана, тухса кай! Епĕ пĕр çыншăн çеç ĕçлеместĕп. Пĕтĕм халăхшăн ĕçлетĕп!

**Хресђен** (хăраса). Кайап, кайап ан йатлаç (тухаĭ).

**Тит.** Пошĕ мой, токлат ту, сайавленни пăх! Ђорт снайет што! (тухса кайаĭ).

**Хресђен** (Карп патне пырса). Сана пăхса тухма хушрĕ, пăхса парха пушалăстă!

**Карп** (сехет çине пăхса). Ĕç вăхăђĕ пĕтнĕ, калаçмалли çук халĕ сайавленине веç çав çынна парса хăвар. Ыран пăхса тухăпăр (тухса кайаĭ. Ун хыçĕнђен Маруççă тухса кайаĭ).

**Хресђен** (Паљук патне пырса). Ме йулташ, сайавленине илсе йул, ыран пуçлăхне пар.

**Паљук.** Ыран кил ырă çын. Ыран парĕç!

**Хресђен.** Спаçиппă, спаçиппă йулташ! пушалăстă ыран иртерех сайавленине кăтартха.

**Паљук.** Епĕ пўрократ мар. Мĕн хушнине, ыйтнине пăђах туса пыратăп (хута илсе папкă ăшне ђикет). К делу!

Ђаршав.

---

# 2-МӖШ ПАЙӖ.

## 1-МӖШ КУРӐННИ.

Стсенӑ малтанхийех. Карп хаҫат вуласа ларатъ, Пађук Маруҫҫӑ ҫине пӑха-пӑха ӳкерђӗк туса ларатъ. Маруҫҫӑ йуратуллӑ ҫырусем пиђетлесе-вула-вула хӑй тӗллӗн савӑнса ларатъ. Пӑртак тӑрсан Тит вӗтеленсе пырса кӗрет. Тита курсан пурте ӗҫленӗ пек пулса ларасҫӗ.

**Маруҫҫӑ** (Тит хӑй патӗнђен иртсе кайнӑ ђухне). Страствуй, Тит Титтӑђ!

**Тит** (сиввӗн). Страствуй! (хӑй вырӑнне кӗрсе ларатъ).

**Карп.** Ҫавраҫиллӗ, мӗн пулнӑ кӑна?

**Тит.** Пошӗ мой, пошӗ мой! Тата мӗн курмалли пурши? А, пуҫ ҫаврӑнатъ! Мана, мана хурлама хӑтланасҫӗ! Ӑҫта кулак? Ӑҫта ђухӑн? Ӑҫта патрак тесе ыйтса тӑна илеђђӗҫ. Йалта мушикрен урӑх мӗн пултӑрши? Ах, пошӗ мой! Ӗлӗк тем ђухлӗ пысӑк, аслӑ ҫынсене йуранине халӗ комиссарсене йураймастӑп виш! Вӗсем ђухлӗ пултараймастӑп. Пӗлесҫӗши вӗсем епӗ камне! Тсс! Тит Титтӑђ! (ҫӑварне хуплатъ). Итлемерӗҫ пулсан йуратъ. Сирӗн аппарата ҫӗнӗ сывлӑш кӗртме, вытвишентсӑ паратпӑр тесҫӗ. Епӗ пултарайманнине вытвишентсӑ пултаратъ виш! Курӑпӑр, мӗн тума пултарӗ? Карп Карппӑрђ! килха кунта!

**Карп.** (Тит патне пыратъ). Мӗн тумалла Тит Титтӑђ?

**Тит.** Карп Карппӑђ, пирӗн патра вытвишантсӑ йарасҫӗ, ӗҫ тупса парас пулатъ.

**Карп.** Ӗҫ нумай, Тит Титтӑђ, такам вађђи те ҫитет. Тупса парӑпӑр.

**Тит.** Тупса парас пулат̆. Халĕ урăх кирлĕ мар есĕ, кай!

**Карп** (Тит патĕнђен тухса хăй вырăнне ларат̆). Паљук, килха кунта!

**Паљук.** Мĕн ĕç пур Карп Карпăђ?

**Карп.** Пирĕн патра вытвишентсă килет, ĕç тупса парас пулат̆.

**Паљук.** Тупса паратăп Карп Карпăђ. Ĕç питех те нумай халĕ, такам ваљљи те çитет.

**Маруççă.** Ах, вытвишентсă килет пирĕн патра! Мĕнле çын вара вăл, вытвишентсă текенни?

**Паљук.** Килсен курăн.

## 2-МĔШ КУРĂННИ.

Çавсемех. Малтанхи хресђенех пырса кĕрет. Паљук патне пырат̆.

**Хресђен.** Мĕнле йулташ, ман сайавленине пăхса тухнăи? пуçлăхĕ килнĕи, ман ĕçе татса кайасђĕçке пайан.

**Паљук.** Сайавлени, мĕнле сайавлени? (пăхкалат̆).

**Хресђен.** Ара ĕнер парса хăвартăмçке сана!

**Паљук.** Ман патăмра çук. Сана курман епĕ, суйса ан тăр кунта. Ĕнерхине пурне те астăваймăн кунта. Пайанхисене те туса пĕтермелле мар. Çыр луђђă тепĕр хут сайавлени, ĕç ђасрах пулĕ.

**Хресђен.** Ман çырса хатĕрленийех пур. Калат̆ мана ађа—атте иккĕ виççĕ çырса парам тет, пĕрне çухатсан тепри хатĕр пултăр тесе. Ђухлат̆ мĕн вăл каналђйă! (Кăларса парат̆). Акă ме, çавнах çырнă ку сайавлени çине те.

**Паљук.** Малтан çекреттар патне кайса ресољутси çыртарха.

**Хресђен.** Йурать, йурать! (Карп патне пырать). Меха йулташ ресођутсине хывса пар.

**Карп.** Ҫӗнӗ хут, шурнал ҫине ӳкерттер малтан, вара ресођутси хывса парӑп.

**Хресђен.** Ара, ӗнер те малтан сана ресођутси хывтарнӑђђӗҫке епӗ.

**Карп.** Е-е, старик! Ӗнерхине пайан асӑнмалли ҫук. Пурнӑҫ малалла пынине пӗлетни? Есӗ мана кайалла илсе кайасшӑн. Ҫук, ҫук! Ӗнерхи ӗҫе пайан та тума, ҫав тери пӗлмен ҫынах мар епӗ. Халӗ старик кашни кун ҫӗнӗ йӗрке. Ҫавна сирӗн те пӗлме вӑхӑт ҫитнӗ ӗнтӗ!

**Хресђен.** Аптрамалла, тата темле йӗркесем курмалли пурха? (Пађук патне пырать). Йулташ, пайанхи ҫӗнӗ йӗркесемпе малтан шурнал ҫине кӗртмелле терӗ. Вара тин ресођутси хывса паратӑп терӗ. Меха шурнал ҫине кӗртсе пар ђасрах. Номӗрпе ђыслине те ҫырсах пар.

**Пађук.** Вӑл ҫӗнӗ йӗркесене приккас ҫине ҫырман халӗ.Ҫавӑнпа ресођутси хывмасӑр ҫырса пама пултараймастӑп. Приккас ҫырни пулнӑ пулсан пӗр сӑмахсӑрах туса парӑттӑм. Манра ӗҫ ђарӑнса тӑмасть.

**Хресђен** (Карп патне пырса). Ҫӗнӗ йӗркесене приккас ҫине ҫырни ҫук терӗ. Ҫырса паран пулӗ.

**Карп.** Приккас? Приккас ыран пулать! Пайан пуҫлӑхӑн приккас ҫине алпусмалли кун мар. Ыран кил, ыран хатӗр пулать!

**Хресђен.** Ара мӗн, мӑшкӑлатӑри есӗр мана? 35 ҫухрӑмран лашапа килтӗм. Виҫӗ кун пурӑнатӑп! Есӗр мана ӗҫе татса памастӑр. Ђим халӗ! Йӗркине тупса парӗҫ! Тӗнђере есӗр ҫеҫ мар!

**Карп.** Йатлаҫма тула кай, кунта йурамасть! Кунта уђрештени!

**Хресђен.** Кăтартăпха сире! Ťфу! шуйттансем!

**Паљук.** Старикĕн вăрçса ђунĕ пăртак лăпланђĕ пулмалла (кулаť).

**Маруççă.** Ай-ай, усал старик!

## 3-МĔШ КУРĂННИ.

Хресђен йатлаçа-йатлаçа кайалла алăк патнелле ђакса пыраť. Алăк патне çитсен çаврăнаť. Çав вăхăтра алăкран васкаса Орхутка кĕрет. Иккĕшĕ перĕнеççĕ.

**Хресђен.** Ах суккăр куç, çынна курмастăн. Ťфу! (тухса кайаť).

**Орхутка** (çамкине хыпаласа). Пăван çамкана çурса пăрахађђĕ. Çамкине те ђулран тунă. Ай-ай, ай-ай! (Паљук патне пыраť) стравствуй, йулташ!

**Паљук.** Мĕн кирлĕ?

**Орхутка.** Ман саветуйушђипе курса калаçмалли пур. Питĕ пысăк ĕç, курма пулаťи?

**Паљук.** Çекреттартен ыйт, епĕ пĕлместĕп.

**Орхутка.** Йураť, йулташ, йураť (Карп патне пыраť). Йулташ çекреттар, ман питĕ пысăк ĕçпе Тит Титтăђа курмалли пур. Ђăрмантарнăшăн ан çиленĕр. Хăй пури?

**Карп.** Саветуйушђи пур, анђах халĕ вăл никама та йышăнмасť. Сайавлени çырса пар, сайавлени тăрăх маларах йышăнма пултараť.

**Орхутка.** Нимĕн те кирлĕ мар. Есĕр кĕрсе çеç пĕлтерĕр (вăрттăнтарах),—Орхутка Уртемйăђ курасшăн сире тесе. Вара сайавленисĕрех йышăнĕ.

**Карп.** Каласа пăхам, йышăнĕи? (кĕрсе кайаť).

**Тит.** Мĕн кирлĕ Карп Карпăђ? Вăхăтсăр çӳрен, мани есĕ сан ман патма хăш вăхăтра кĕмеллине?

**Карп.** Çаплах, Тит Титтăђ, манман, манман. Анђах пĕр çын курасшăн сана. Орхутка Уртемйăђ йатлă терĕ. Йышăнатри—али кăларса йараси?

**Тит.** Орхутка? Ăçта вăл? Çук, йышăнмастăп, халĕ ĕç нумай!

**Карп.** Йурĕ, çапла каласа паратăп (тухса кайма тăрат̆).

**Тит.** Постой, Карп Карпăђ. Çук, кала! Кĕтĕр!

**Карп.** Йурат̆, çапла калатăп (тухса кайат̆).

**Тит.** Мĕн кирлĕши ку Орхуткана, мĕншĕн килнĕши ку. Ахаљ те пурнăç нађарланса пырат̆, тата вăл килнĕ.

**Орхутка.** Мĕнле, йышăнат̆и мана Тит Титтăђ! йулташ çекреттар.

**Карп.** Кĕр, йышăнат̆!

**Орхутка.** Спаççипă, спаççипă, йулташ çекреттар (Тит патне кĕрсе кайат̆. Кĕрсен самайах пĕр-пĕрин çине пăхса тăраççĕ).

**Тит.** Ну лар, Орхутка Уртемйăђ.

**Орхутка.** Ай-ай сиввĕн йышăнан есĕ мана, Тит Титтăђ. Аслине кĕнĕ, мĕн тăвас. Маннă шур...р...р...

**Тит.** Т-с-с-с. Йĕри тавра çынсем лараççĕ. Пăртак ђухласа калаçас пулат̆. Мĕн ĕçпе килтĕн, кала?

**Орхутка.** Астуман Тит Титтăђ, каçар! Курманни нумай пулат̆, кунта тенине илтрĕм те, кайса курамха тесе килтĕм. Пин те тăхăр çĕр вунсаккăрмĕш çулта...

**Тит.** Т-с-с-с!.. йерипен!

**Орхутка.** Т̆фу! пĕлекен çынпа та ђунран калаçма ирĕк çук. Ну и самана!

**Тит.** Калаçасси, килте те калаçăпăр. Халĕ мĕн ĕçпе килнине каласа пар. Мана курма çеç килменни сан таçтан та паллă.

**Орхутка.** Тит Титтăђ! Мĕн пур шанăç сан çинђе. Инкекрен хăтар, ĕмĕрех манмăп! Пилĕк пин тенкĕ на-

лук хуђёç, тӳсме май çук. Ёлёкхине манман пулсан каçар, сан ирёкре. Каçарсан пин тенки сана пулаЙ. Сататкине халех параси?

**Тит.** Манман! Манман! Сайавлени пури сан?

**Орхутка.** Пур, пур, акă ме (кăларса параЙ).

**Тит.** Тавай ђасрах. Халё ёнтё ман хваттере кай. Сататкă çинђен те унтах калаçăпăр. Акă ме сана ман хваттерён атрёсне (çырса параЙ). Халё тухса кай!

**Орхутка.** Кайас, кайас! Сывă пулса тăрха тепёр куриђђен, Тит Титтăђ! (тухса кайаЙ).

**Тит** (Орхуткана ăсатса тухаЙ). Сывă пул, сывă пул!

**Орхутка.** Сывă пулăр йулташсем (тухса кайаЙ).

**Карп.** Ђипер кай!

**Тит.** Карп Карпăђ! Района çак ман ресолђутси тăрăх хут çырса йар. Пайанах йанă пултăр, илтрёни?

**Карп.** Илтрём, илтрём, Тит Титтăђ! Пайанах пулаЙ!

## 4-МЁШ КУРĂННИ.

Çавсемех, Титпа Карп Карппăђ калаçса тăраççё. Лариван кёрсе Палђук патне пыраЙ. Палђука хут кăтартаЙ.

**Палђук.** Мён кирлё сана? Мён хуђё ку сан?

**Лариван.** Вуласа пăх, вара пёлён!

**Палђук.** Çекреттар патне кай!

**Лариван.** Мана кунта ёçлеме йанă, ăçта сирён пуçлăхё?

**Тит.** Мён кирлё сире? Пуçлăхё епё?

**Лариван.** Есёри? Акă ме сирён валђи хут. Епё вытвишентсă, мана кунта ёçлеме йађёç.

**Палђук.** Вытвишентсă?

**Маруççă.** Ах, вытвишентсă? (пурте ура çине тăрса тёлёнсе пăхса тăраççё).

Ђаршав.

## 3-МĔШ ПАЙĔ.

### 1-МĔШ КУРĂННИ.

Стсенă малтанхийех. Сахйе пĕҫҫенех, ҫăланран тухаҫ. Аллинҫе шҫуткă пур.

**Сахйе** (анаслаҫ). А-ы-х! Тĕп пултăр ку Çумкка тени, ыйăха татса çӳренĕшĕн. А-ых! çапла хăй питех те кăмăллă вара. Урайне тасатас пуҫ. А-ых! (урайне шăлаҫ). Вăйăлла-кулăллах тем, хырăм пысăкланма пуçларĕ. Халиҫҫен кун пекех туйăнмасҫĕçке çав! Пулҫĕ пулмалла. Анҫах Çумккана пăрахса теприне лектерес пуҫ. Хам пек çара Çумккаран мĕнне илен унтан! Çав вытвишентсă текенне лектересҫĕха. Шалу пысăк илет, унтан нумайтарах шăйăрма та пулаҫ. Çумккапа иксĕмĕре те çитĕ вара. А-ых! Ир тăнă пайан. Тăхăр сехет те çитеймен.

### 2-МĔШ КУРĂННИ.

Сахйе урай шăлаҫ, Лариван кĕрет. Сĕтел ум нелле пырса тăраҫ, шкапсем тăрăх пăхкалаҫ.

**Сахйе** (йăпăлтатса). Мĕншĕн питĕ ир килтĕн, Лариван? Тăхăр сехет те çитменçке! (шҫуткине ҫăлана илсе кĕрсе кайаҫ).

**Лариван.** Пулмасҫ кунта пурăнса. Вĕрентмеççĕ, кăтартмаççĕ мĕн ĕç тумаллине. Кунĕпе хутсем çĕлеттересççĕ, ҫей ĕçме çăкăр кайса-илсе парап. Ахалех йалтан

илсе килҗӗҫ. Ҫырап акӑ сайавлени, кайатӑп йала (сӗтел хушине ларса хут илсе ҫырать).

**Сахйе** (Җӑланран тухса Лариван патне пырать. Ҫӗнӗ тутӑр ҫыхнӑ. Кӗписене тӳрлеткелет). Лариван, пурнӑҫ пырати? Мӗн пӗртте кӑмӑл ҫук вара сан? Тем ҫырать тата?

**Лариван.** Ҫырмалли пур та, ҫыратӑп.

**Сахйе.** Арӑму патне ҫыру ҫыратни? Хулана җӗнме шут пуриха тен?

**Лариван.** Сана мӗн ёҫ. Киректе ӑҫта ҫырам!

**Сахйе** (Лариван ҫумнерех шуса). Театтӑра кайатни?

**Лариван** (тепӗр ҫӗререх сиксе ларать). Җимха, җим ман патналлах ан ҫыпӑҫха. Ёҫлеме җӑрмантаран!

**Сахйе.** Кансӗрлеместӗпҫке, мӗншӗн манран хӑран вара?

**Лариван.** Хӑраса мар, ҫырса пӗтересҗӗха ман, ыттисем ёҫлеме килиҗҗен. Ыттисем килсен сӗтел пулмасть!

**Сахйе.** Хам пата пыр, ман сӗтел пур, пукан та пур. Ҫӗрӗпе ҫырсан та җармастӑп.

**Лариван.** Ҫырса пӗтертӗм ёнтӗ кунтах...

**Сахйе.** Ах, Лариван, Лариван! Пӑхап-пӑхап та сан ҫине, питӗ илемлӗ ҫын есӗ. Сан пек ҫынна пулсан... ах!

**Лариван.** Мӗнтен? Мӗн калаҫан?

**Сахйе.** Асту, туймастӑн пулҗ. Пӗлмӗше пенӗ виш!

**Лариван.** Мӗн пӗлеп епӗ, ним те пӗлместӗп. Пирӗн йалта труках сан пек калаҫмаҫҫӗ. Хулари ҫынсем калаҫнине ӑҫтан җухлас ман!

**Сахйе. Ах, йуратап сана,** Лариван, ҫӗр каҫа сан ҫинҗен шухӑшлап. Йурат мана есӗ те, пурӑнӑпӑр иксӗмӗр пӗрле! (тытма хӑтланать).

**Лариван** (пукан ҫинҗен тӑрса кайса). Ес мӗн, ес мӗн? Ӑсран кайман пулӗ? Ман арӑм пур, аҗа-пӑҗасем пур. Ан ҫыхлан, ан ҫыхлан ман патна. Ман санпала айкашмасӑр та пурнӑҫ җаплах мар халӗ.

**Сахйе.** Ҭфу, мушик тӗк, мушик есӗ. Хӑвна йуратакан ҫынна сивӗтен!

**Лариван.** Йураҭ мана мушик пулсан та. Мушик маррисен патне кай. Пӗлетӗп епӗ, есӗр мӗнле йуратнине! Пирӗн йал ҫыннине пӗрне ҫак сан пек пӗр майра йуратнӑ та, пайан кун та шалун виҫҫӗмӗш пайне тӳлесе пурӑнаҭ.

**Сахйе** (шӑртланса). Мӗн туса тӑран?! Манни есӗ ирхине мӗн ӗҫ тумаллине?!. Мӗн ӗҫ тума хушнӑҗҗӗ сана саветуйушҗи. Вут ҫурса патӑни есӗ мана.

**Лариван.** Вут ҫурмалли вӑл ман ӗҫ. Сана йуратасси пек мар. Вутне ҫурса паратӑп (тухса кайаҭ).

**Сахйе.** Тошӗ вытвишентсӑ, наҗҗалнӗк вӗт. Парам сана вытвишентсӑ!

## 3-МӖШ КУРӐННИ.

Сахйе пӗҗҗенех.

**Сахйе.** Мӗнле ҫавӑрас ку упана? Тем туса та пӑхрӑм, ҫапах ҫаврӑнмасҭ (хытӑ сасӑпа макра-макра калаҭ). Аҗа пулаҭ. Ҫумккан укҫа ҫук. Ах турӑ, мӗн тӑвамши?

## 4-МӖШ КУРӐННИ.

Сахйе макӑрса тӑраҭ. Ҫав вӑхӑтра Паљук кӗрсе итлесе тӑраҭ.

**Паљук** (хӑй тӗллӗн). Выҫӑ кашкӑр улаҭ. Ҫумкка сахал пулнӑ пулмалла. (Хыҫалтан пырса вӑрттӑн, Сахйене шарт сиктерет).

**Сахӣе.** Атте! (йӑванса кайаť. Паљук каςса кайса кулаť) (макӑрса), Паљук-пылђӑк, мӗн тесе ςав тери ςынна хӑратан? (ђарӑнмасť, Шӑртланса).Мӗн кулан? Ах Паљук-пылђӑк темерӗн (тӑраť) айайах, вар ыратса кайрӗ. Айайах-айайах! (хырӑмне тытса кӗрсе кайаť).

**Паљук.** Вар ыратаť? Сан варна шапа кӗрсен те ыраттараймӗ! (Сӗтел хушшине пырса лараť. Хутсем, папкӑсем туртса кӑларса сӗтел ςине хураť). О-о! Тӑхӑр сехет иртсе те кайнӑ. Кун иртеť те каς пулаť. Вӑхӑт шӑваť. Вунулттӑмӗш ђысла ςитсен шалу параςςӗ... К делу!

## 4-МӖШ КУРӐННИ.

*Пӳртре Паљук. Карп тата Маруςςӑ кӗреςςӗ. Хӑйсен вырӑнӗсене лараςςӗ.*

**Карп.** Е-е! ςирӗм минут анђах иртнӗ.

**Паљук.** Стравствуй Маруςςӑ! Мӗнле сан кӑмӑлсем? (кулаť).

**Маруςςӑ.** Мӗн шӑлна йерен? Йӑлтах ывӑнтӑм, ух-ух!

**Паљук.** Хӑйӑр ςине ςурӑма хӗртме кайсаи? (кулаť). Ха-ха-ха!

**Маруςςӑ.** Тит Титтӑђ килсен каласа парамха. Ун ђухне мӗнле йерӗн шӑлна! курӑпӑрха!

**Паљук.** Маруςςӑ, уншӗнех ан ςилен ӗнтӗ. Пӗр-пӗрин хушшинђе тем калаςмалли те пулӗ.

**Маруςςӑ.** Сан пеккисемпе калаςса, ςӑвар пылаккине те сайа йамастӑп епӗ.

## 6-МӖШ КУРӐННИ.

*Σавсемех, Лариван кӗреť.*

**Карп.** А, йулташ Лариван! Кайа йулнӑ, кайа йулнӑ йулташ! Вуннӑ ςине ςур сехет кайнӑ. Пирӗн уђрештенире ун пек кайа йулса ςӳремеςςӗ.

**Лариван.** Ирех килнĕђђĕ епĕ, Сахйене вут çурса патăм.

**Карп.** Ну, латнă! Ним тума та çук, вытвишентса каçарас пулаť. Ĕçе вĕрентес пулаť. Паљук, Ларивана ĕç тупса пар.

**Паљук.** Ĕç нумай, тупса паратăп. Лариван кил кунта!

**Лариван.** Халех пыратăп, ман пиђетлемелли пĕр хут пурха. (Маруççăна параť). Çак хута пиђетлесе парха, йулташ Маруççă. Питĕ кирлĕ вăл мана.

**Маруççă** (хута илсе пăхкалаť). Фи, ђывашла çырнă, ђывашла çырнине вулама пĕлместĕп епĕ.

**Лариван.** Вырăсла çырма пĕлсех каймастăп, мĕн тăвасха ĕнтĕ?

**Маруççă.** Ме, вырăсла анђах пиђетлетĕп епĕ. Кунта ђывашла çырмаççĕ. Йалти мар кунта (хута кайалла параť).

**Лариван.** Мĕн тăвас тен? Ним тума!...

**Паљук.** Йулташ Лариван!

**Лариван.** Мĕн тăвасха?

**Паљук.** Есĕ ĕнерхи хутсене çĕлесе пĕтертĕни?

**Лариван.** Пĕтерейменђђĕха, пайан çĕлесе пĕтереп.

**Паљук.** Ĕçе вăхăтра туса пыманни аван мар, йулташ Лариван! Акă ме сана тата хутсем. Пайан çĕлесе пĕтер.

**Лариван.** Йураť, йураť. Пайан çĕлесе пĕтеретĕп (Паљук сĕтелĕ умне тăрса ĕçлет). Пукан кирлĕђђĕ. Кунĕпе тăрса ура ывăнаť те.

**Паљук.** Хут çыратна мĕн есĕ? Хут çĕлесси, çырассийех мар вăл. Ура çинђен те ĕçлеме пулаť.

**Карп.** Йулташ Лариван, кил халĕ кунта!

**Лариван** (пыраť). Мĕн тăвасха?

**Карп.** Меха сана укҫа, ҫăкăр, кăлпасси, тата пĕр пађкă пирускă илсе кил.

**Лариван.** Тавай, илсе килĕп!

**Карп.** Асту ан ман, сафо ил!

**Паљук.** Ман ваљљи те илсе килха ҫăкăрпа кăлпасси. Акă ме укҫа.

**Маруҫҫă.** Ман ваљљи те илсе кил. Ҫăкăр ҫемҫи, кăлпассине ҫулли, пĕр татăк шăккалат илсе кил.

**Лариван.** Йурĕ, йурĕ!

**Маруҫҫă.** Асту, мĕн илсе килме каласа йанисене ан ман!

**Лариван.** Йураť, илсе килетĕп: (тухса кайаť).

**Маруҫҫă.** Ах, ĕҫлесе йăлтах ывăнтăм!

**Паљук** (хутсене иле-иле пăрахаť). К делу! К делу! Тепле ҫырма ӳркенмеҫҫĕ. Ҫĕлесе пĕтермелле мар! К делу!

## 7-МĔШ КУРĂННИ.

Ҫавсемех, хашкаса Тит кĕрет. Сăмах калаймасăр пӳртре ҫаврăнкаласа ҫӳрет.

**Тит.** Ăҫта Лариван йулташ, ăҫта?! Ах, пошĕ мой! Ăҫта Лариван? сире калатăп вĕт, ăҫта Лариван?

**Карп.** Мĕн пулнă, Тит Титтăђ? Ларивана ҫăкăрсем илме йатăмăр.

**Тит.** Ах, пошĕ мой! Пĕлетĕри есĕр?!. Тасату пынине! Пирĕн уђрештенине тасатма пуҫлаҫҫĕ! Ăҫта Лариван?

**Карп.** Тасату? Вăт кĕтмен!

**Паљук.** Тасату?

**Маруҫҫă** Мĕнле тасату?

**Тит.** Тасату ҫав, тасату! Йулташсем, тавайăр ђасрах Лариван ваљљи сĕтел-пукан таврашĕ хатĕрлĕр. Тавай,

тавай ђасрах, хăй килнĕ çĕре хатĕр пултăр! Сахйе! Килха ђасрах!

**Сахйе** (ђăланран тухса). Мĕн тумалла, Тит Титтăђ?

**Тит.** Сахйе, сан унта лайăх сĕтелех пулас?

**Сахйе.** Пур, мĕн тумалла?

**Тит.** Тавай, илсе килĕр ђасрах. Пукансем илсе килĕр.

**Сахйе.** Айтăр, епĕ пĕђђен илсе килес çук.

**Тит.** Карп Карппăђ. Паљук, Маруççă! Кайăр ђасрах пушаластă! Илсе килĕр!

**Карп.** Халех туса паратпăр. (Пурте тĕпĕртетсе, пĕтĕрĕнсе çӳреççĕ. Пукансем, сĕтел илсе тухаççĕ. Пĕри—теприне пыра-пыра перĕнеççĕ).

**Тит.** Тавай ђасрах, тавай! Ах, пошĕ мой! Ђимĕрха, ђимĕр! Пукана манне лартăр, кăна ман ваљђи лартăр (Тит пуканне улăштарса лартаççĕ).

## 8-МĔШ КУРĂННИ.

Малтанхисем тĕрлетеççĕ. Çав вăхăтра Ларииван кĕрсе пăхса тĕлĕнсе тăрать. Аллинђе курçинка пур.

**Лариван.** Ухмаха йермен пулĕ ку çынсем? Мĕн пулнă вĕсене? (Паљук патне пырса, курçинккăран çăкăрпа кăлпассине кăларса парать). Акă ме, илсе килтĕм!

**Тит** (Ларивана курса). А, йулташ Лариван Иванăђ, кил, йĕрке... кунта! Пăрах çĕре ку курçинккăна (курçинка, Ларииванран илсе çĕре лартать. Йапалисем урайне тăкăнса сапаланса кайаççĕ. Паљук, Карп, Маруççă пĕрпĕрне тĕрте-тĕрте, ку ман!—Ку ман! тесе тĕрлетсе пĕрпĕринђен тытса илсе тĕркĕшсе кайаççĕ. Сахйе шăккалатне илсе тарать).

**Лариван.** Мĕн пулнă, нимĕн те ăнланмастăп.

**Тит.** Пушалăстă, йулташ Лариван Иванăђ. Сана ваљђи ĕçлеме сĕтел те, пукан та лартса патăмăр. Пушалăстă! Пушалăстă! (Çавăтса илсе пырса лартаť).

**Тит.** Ђернил кĕленђи лартса пама астуман. Çиђђас хамăнне паратăп (илсе тухса параť). Ĕçле, ĕçле, йулташ Лариван Иванăђ!

**Маруççă** (саспа макăрса йараť). Ман шăккалата такам илнĕ... Ман шăккалата таçта хунă..

**Тит**. Ђарăн, Маруççă. (Маруççă патне пырса вăрттăн). Тасату иртсен йешђĕкĕпе илсе парăп!

**Маруççă.** Апла пулсан ђарнап!

**Лариван.** Мĕн пулнă? Нимĕн те ăнланаймастăп.

Ђ а р ш а в.

# 4-МӖШ ПАЙӖ.

## 1-МӖШ КУРӐННИ.

Стсенӑ малтанхийех. Совет аппаратне тасатакан комиçç*и* ларӑвӗ. Сӗтел хушшинђе комиççи ђленӗсем — рапођђисем ларaççӗ. Итлеме пынӑ çынсем, вӗсем хушшинђе репођђисем, хресђенсем, слушӑшђисем нумай. Тит, Карп, Паљук, Сахйе, тата Маруççӑ ларaççӗ. Тата малтан вӑйӑра пулнӑ йал хресђенӗ ларaт.

**Комиççи.** Малалла Тит Титтӑђа тӗрӗслеме тытӑнӑпӑр. 1890 çулта çуралнӑ вӑл. Уђрештенин пуçлӑхӗ. Пурнӑçӗ çинђен хӑй каласа парӗ. Тавай Тит Титтӑђ каласа пар.

**Тит** (сӗтел умне пырса тӑраt). Йулташсем, епӗ 1890 çулта, ђухӑн хресђен çемйинђе çуралнӑ. Çамрӑклах питӗ нумай нуша курса ӳснӗ çын. Керманђ вӑрçинђе пулнӑ. Совет пулнӑ хыççӑн пӗрмайах ӗçлетӗп. Райпротра, Упротра, Купротра, таçта та ӗçлесе курнӑ. Халӗ кунта ӗçлетӗп. Мана тaкам та, таçта та пӗлеççӗ. Пирӗн уђрештенинђе ӗç питех тикӗс пыраt. Пӗтрӗ те. Ыйтусем пулсан—ответ парӑп! Пушалӑстӑ, ыйту парӑр йултaшсем!

**Комиççи.** Камӑн ыйту пур йултaшсем?

**Рапођђи.** 1917-мӗш, вунсаккӑрмӗш çулта ӑçта пулнӑ есӗ?

**Тит.** Килте, килте, пурӑннӑ. Çӗр ӗçлесе пурӑннӑ.

**Хресђен.** Миçе пўрократ, волокитђёк сирён уђрештенинђе?

**Тит.** Апласкер çук вара пирён. Акă ун çинђен йулташ Лариван Иванăђ та—вытвишентсă каласа пама пултарать.

**Лариван.** Тит Титтăђ каласа парха есё, мёнле мана йышăнтăр, мён ёçлеме вёрентрёр.

**Тит.** Йышăннă, питё аван йышăннă. Хам ларакан пукана, ђернил кёленђине патăм сана.

**Комиççи.** Орхутка Уртемйăђпа, мёнле ёç пулнăха сирён?

**Тит.** Орхутка, Орхутка? Астумастăпçке епё. Мёнле ёç пулнăши?

**Комиççи.** Пилёк пин тенкё налук тўлессинђен кама каçартăн, астумастăни?

**Тит.** Налук каçарни, налук каçарни пулнă пулмалла. Налук тёрёс мар хывнă пулсан, каçармалла пулнă. Мускавран çавăн пек хушни пулнă.

**Рапођђи.** Краштăн вăрçи ђухне, шуррисем çинђе ухвитсер пулмани вара есё?

**Тит.** Шурри, шурри çинђе!

**Комиççи.** Калаç Тит тёрёссипе!

**Тит.** Шуррисене куçпа та курман епё, пёлместёп, пăхăр унта токкумёнтсем пăђах пур, епё ăçта мёнле çын пулни (айккинелле пăхса, хăй тёллён). Пётрё, пурнăç пётрё. Пётёмпех пёлеççё.

**Рапођђи.** Ёлёк салтакра мёнле ђин пулнăха сан?

**Тит.** Ухвитсер пекки пулкаланă, ăна тёрёссипех калас пулать. Пытарма йуратмастăп епё. Анђах вăл ёлёк пулнă, халё мар. Халђхи пурнăçшăн вăл нимён те мар.

**Комиççи.** Тит, каласа парха есĕ пире. Йалта мĕнле, кулакпа ђухăн килĕшсе пурăнаççĕи?

**Тит.** Йалтаи? Йалта мĕн кулакĕ мĕнни пултăр унта? Кам ĕçлет—лайăх пурăнаť, кам йулхав—ђухăн пурăнаť. Çĕр пĕр пекех вĕсен. Ман шутпа йалта ђухăн, пуйан çук. Мушиксем, хресђенсем пур. Вĕсем килĕшсе пурăнаççĕ пулмалла.

**Комиççи.** Класлă кĕрешў пури йалта?

**Тит.** Йалтине пĕлме, епĕ йалта ĕçлеместĕп. Пирĕн уђрештенинђе нимĕнле тавлашу та çук. Пĕр-пĕринпе кăмăллă пурăнатпăр. Мана урăх пĕлмелли те кирлĕ мар.

**Комиççи.** Тата камăн ыйту пур?

**Халăх хушшинђи сасăсем.** Çитет, çитет. Кайăк хăш йăваран вĕçсе килни ахалех паллă.

**Комиççи.** Йурĕ, ыйтусем панипе çитĕ апла пулсан. Кам калаçас текенсем пур?

**Карп.** Мана сăмах парăрха?

**Комиççи.** Итлĕр! Карп каласа парас тет.

**Карп.** Йулташсем, епĕ Тит Титтăђпа икĕ çул ĕçлетĕп. Тит Титтăђа питĕ таса пĕлетĕп. Тит Титтăђ хăй ĕçне аван пĕлекен çын. Пĕр хута та номĕрне, ђыслине çырмасăр, штампне хывмасăр ал пусмасť. Ĕçе çав тери йĕркеллĕ туса пыма йуратаť вара. (Халăх кулса йараť). Мĕн кулмалли пур унта. Тит Титтăђ питĕ аван çын, ман шутпа вăл хăй вырăнĕнђех ĕçлеме тивĕçлĕ çын (лараť).

**Хресђен** (хăйпе йунашар ларакан çынпа калаçаť). Акă пăх мĕнле çаптараť вăл, мур.

**Лариван.** Мана сăмах парăрха?

**Комиççи.** Тавай, калаç, калаç!

**Лариван.** Йулташсем, епĕ нумайах ĕçлемен Тит Титтăђпа. Мана ку уђрештенине вытвишентсă туса ĕçлеме

илсе килђĕç йалтан. Малтанах мана питĕ кăмăлсăр йышăнђĕç. Мĕн кăна тутарттармасђĕç: вут çуртарађђĕç, хутсем çĕлеттеређђĕç, тата кăнтăрла çитсен çăкăрсем илме йарађђĕç. Ларма пукан та памарĕç. Пĕрмай ура çинђе ĕçлерĕм. Йулашки кунсенђе темле пăртак кăмăлланђĕç. Сĕтел те, пукан та тупса пађĕç. Тасатуна сиссе пулĕха кăсем тесе шутларăм вара. Ман шутпа Тит Титтăђа совет аппаратĕнђен хăваласа çеç кăлармалла.

**Тит.** Мĕншĕн çапла калаçан вара есĕ, йулташ Лариван? Хам пукана, ђернил кĕленђине пани сана хисепленменни пулђĕи вăл вара?

**Комиççи.** Тит есĕ кайран калăн. Халĕ çырса пыр. Кам тата калаçас тет.

**Халăх хушшинђен пĕри—рапођђи.** Тит Титтăђа кăштах пĕлетĕп епĕ. Вăл хăй мĕнле çемйерен тухни çинђен питех тĕплĕн каласа памарĕ. Тит—кулак ывăлĕ. 1917-мĕшпе 18-мĕш çулта шуррисем майлă пулса пире хирĕç вăрçнă. Хаљ те вăл йалта ним те çук тесе лăпăртатаť. Епĕ йалтине пĕлместĕп тет. Йалти класлă кĕрешў çинђен пĕлмен çын совет аппаратĕнђе ĕçлеме пултараťи? Çук! Пултараймасť! Шăпăрпа хăваламалла ăна совет аппаратĕнђен!

**Хресђен.** Мана сăмах парăрха йулташсем.

**Комиççи.** Итлĕр, йалти çын калаť.

**Хресђен.** Йулташсем, епĕ хаçат çинђе ађа вуласа панипе çак шуйттана,—çаплах каламха, каçарăр мана ват çынна—тасатас тенине илтрĕм те 35 çухрăмран васкаса килтĕм. Епĕ нумай пулмасť ĕçпе кунта килсе кайрăм. Икĕ кунта ĕç туса памарĕç. Пĕрин патĕнђен, теприн патне çўреттерсе ăнран йађĕç. Хăй майрапа калаçса лараť, мана ĕç туса памарĕ. Тăнланăрха есĕр, йул-

ташсем—йалта ним те çук унта тенине. Ăçта кĕрсе кайнă сан кулак, çăхан! Ăçта кĕрсе кайнă, иртнĕ çура ман хуралтсене çунтарса йанă кулаксем? Ăçта, тесе ыйтатăп санран? Йулхавсем ђухăни?!. Ĕмĕр кулаксем пусмăрланă хала мари?! Çакăн пек çăхансене малалла та советăн ĕçлĕ вырăнĕнђе хăварсан, мĕн ĕçĕ пулĕ вара? Тасатас пулаť! Сăмахĕ те çук! (лараť).

**Комиççи.** Тата кам калаçас тет?

**Рапођђи.** Ђимĕрха, ђимĕр ман тата каласа хăвармалли йулнă!

**Комиççи.** Калаç, калаç!

**Рапођђи.** Аппаратран хăваласа кăларнипе çеç ирттерме йурамасť йулташсем. Сутсен аллине парас пулаť. Пур ĕçĕшĕн те ответ тыттăр. Çитĕ совет çынни тесе пытанса пурăннипе (лараť).

**Халăх.** Тĕрĕс! Тĕрĕс! Сут аллине парас пулаť.

**Комиççи.** Тата кам калаçас тет?

**Халăх.** Çитет, мĕн калаçни те!

**Рапођђи.** Ан çиленĕр, йулташсем, ман каллех каласа хăвармалли йулнă. Килте шухăшласах тухнăђђĕ, пĕр тăрукра калама манса пырап. Сăмах парăрха мана?

**Комиççи.** Тавай калаç!

**Рапођђи.** Ман комиççине çакна каласа хăварас пулаť. Ĕçлĕ вырăнсенђе, уђрештенисенђе те комуниссем йертсе пырас ĕçе татах та вăйлатас пулаť. Епĕр комуниссем çине, вĕсем совет ĕçне тĕрĕс çулпа йертсе пыраççĕ тесе шанса пурăнатпăр. **Ку уђрештенире пĕр комунис та çук курăнаť. Мĕнле апла пулма пултарнă вăл.** Çакна каласа хăварасшăнђђĕ (паусă). Ђимĕрха, тата Тита кăларас, ун вырăнне Ларивана—вытвишентсă лартма сĕнетĕп.

(паусă). Тата хамăр саватпа ку уђрештенине шефа илетпĕр (ларат̆).

**Комиÿÿи.** Тата калаçас текенсем пури?

**Халăх хушшинђи сасă.** Çитет! Çитет! урăх калаçмасăр та ĕç карттин çинђи пекех тасан курăнат̆!

**Комиççи.** Урăх калаçакан çук пулсан, Тит Титтăђа йулашки сăмах паратпăр!

**Тит** Ман, калаçмалли ним те çук (пуçне ђиксе ларат̆).

**Комиççи.** Тит Титтăђ калаçасшăн мар. Пайанлăха комиççи ларăвĕ хупăннă тесе шутлатпăр. Ыран комиççи, Тит, Карп, тата Паљук çинђен мĕн йышăнни çинђен каласа парĕ. Пурте килĕр!

Ђ а р ш а в.

# 5-МĔШ КАРТТИН.

## 1-МĔШ КУРĂННИ.

Стсенă малтанхи пекех. Ҫаршав пăртак хупăнса тăрсанах тепĕр хут уçмалла. Стсенă çинҫе 4-мĕш пайĕнҫе курăннă çынсемех. Комиççи хăйĕн йышăнăвне вуласа парать.

**Комиççи.** Тит Титтăҫа, ĕлĕк пуйан çын пулнăскере, халĕ те рапоҫҫисемпе хресҫенсен тивĕçлĕхне пуйан çынсене сутса пурăннăшăн, аппаратра пÿрократла ĕçлесе пынăшăн, вытвишентсăна ĕçлеме условисем туса паманшăн,—совет ĕçне туса пырас ĕçре йурăхсăр çын шутласа совет аппаратне тасатас шутпа кăларнă инструксийĕ хушни тăрăх, пĕрремĕш каттекорипе тасатас. Ĕлĕк шуррисем майлă пулса, совета хирĕç вăрçнăшăн, пуйансене налукран хăтарса, çав хушăрах ҫухăнсен тивĕçлĕхне хÿтĕлеменшĕн етвот тыттарма сутсен аллине парас. Карп Карппăҫа хуça ывăлĕ пулнăскере, аппаратра пÿрократла ĕçлесе пурăннăшăн пĕрремĕш каттекорипе тасатас. Тит Титтăҫ пуйансене налукран хăтарнине пĕлнĕ пулсан та, тивĕçлĕ оркăнсене пĕлтерменшĕн ответ тыттарма ĕçе сутсен аллине парас. Паҫука ĕлĕк кулак ывăлĕ пулнăскере, аппаратра пÿрократланса ĕçленине, хресҫенсен ыйтăвĕсене туса паманшăн, ĕçлĕ хутсене тивĕçлĕ çĕрех йамасăрах пĕтернĕшĕн пĕрремĕш каттекорипе тасатас. Ларивана—тĕрĕсленĕ шутласа, Тит вырăнне уҫрештенин пуçлăхĕ тăвас.

(Тит, Карп, Пађук пуҫĕсене ђиксе лараҫҫĕ.

**Итлеме пынă ҫынсем алă ҫупса йараҫҫĕ. Тĕрĕс! Тĕ**рĕс! Тахҫанах ҫапла кирлĕ пулнă! Комиҫҫи тĕрĕс йышăну йышăннă)!

**Хресђен.** Йала ҫитсенех—хай ҫăхана сирпĕтрĕҫ тесе хресђенсене каласа кăтартатăп.

**Рапођђи.** Тасату иртнĕ, малалла тасатмĕҫ тесе, йулташсем манса ан тăђђăр. Тасату иртсен те, ҫакăн пек пӳтсĕр ҫынсене малалла та кăлара-кăлара сирпĕтĕпĕр.

**Комиҫҫи.** Ыран Маруҫҫăпа Сахйене тĕрĕслетпĕр. Пурте итлеме килĕр. Пайан салатсан та йураť!

(Пурте тухса кайаҫҫĕ, комиҫҫи те кайаť).

## 2-МĔШ КУРĂННИ.

Халăх тухса пĕтет. Тит, Пађук, Маруҫҫă, Карп, Лариван, тата Сахйе йулаҫҫĕ. Шарламасăр пĕр-пĕрин ҫине пăхкаласа лараҫҫĕ.

**Тит.** Пĕтĕмпех пĕтрĕ. Анђах Лариван Иванăђ ырă ҫын мар есĕ. Епĕ сана хисеплесе, хам ларакан пукана хам ђернил кĕленђипе патăм, есĕ мана хирĕҫ калан. Аван мар, аван мар!

**Лариван.** Кайарах патăн ҫав Тит Титтăђ! Сывă пулăрха, ман кайас пулаť! (тухса кайаť).

**Тит.** Пĕлтĕри ĕнтĕ вытвишентсă текеннине?

**Карп.** Пĕтĕмпех сан пирки пулђĕ ҫак йапала!

**Тит.** Молђаť! Епĕ пуҫлăхĕ али ҫук?!. Ťфу. Ех, мĕн калаҫмалли пур вара?

**Сахйе.** Пăх пуҫлăхĕ лараť! Молђаť! Астăвăр, выкăвăр ан патăр, кăларса ан йатăр! Пĕрремĕш каттекори илсен, йулашкийех мар вăл! (кулаť).

**Тит.** Есĕ те манран кулма пуçларăни? (тăрса тытма хăтланать). Парамха сана кулă!

**Карп.** Лăпланăр, лăпланăр, йулташ пуçлăхĕ! (тытса лартать).

**Сахйе.** Сывă пулăр, хоспота наҧҧалнĕксем (ҧăланне кĕрсе кайать. Шăпăр илсе ҧăлан алăкĕнҧен пăхса тăрать.

**Паљук.** Хамшăн питех куљанмастăп епĕ, йалта мĕнле те пулин пурнкалăп. Маруççă питĕ шалккă. Ракĕ те çук, пулли те пĕтрĕ. Пушмак тĕпĕ йакалсан тем курĕ ĕнтĕ!

**Маруççă** (тăрса, макра-макра алăк патнелле кайать). Пĕр йешҧĕк шăккалат пĕтрĕ!..

**Сахйе** (ҧăлан алăкĕнҧен пăхса, макăрнă пек туса виртлесе тăрать).

**Тит** (Маруççă патне ҧупса пырса). Маруççă мĕн уншăнах хурланан? Мĕн пулнă?

**Маруççă.** Кай, ан çыхлан ман пата! (макăрса). Пĕр йешҧĕк шăккалат пĕтрĕ... (иккĕшĕ те тухса кайаççĕ).

## 3-МĔШ КУРĂННИ.

Паљук, Карп тата Сахйе.

**Паљук.** Шăккалатсем карĕç тухса, пирĕн мĕн тăвасха ĕнтĕ?

**Сахйе.** Айта есĕр те тухса кайăр! Ман урайне шăлса тасатмалла (Паљукпа Карп патнелле пырать).

**Паљук.** Халҧҧен ирпе тасатаканҧĕçке, халĕ мĕн пит харсăрланса кайрăн?

**Сахйе.** Айта, айта, тухса кайăр, кĕрлесе лармалли çук кунта. Тасатас пулать те, питĕрсе çыврас пулать.

**Паљук.** Çумккана та кĕртместĕни вара?

**Сахйе.** Тата лăпăртатса ларатраха есĕр, пĕрремĕш каттекорисем? (шăпăрпа çапма пуçлаť).

**Паљук.** Ђимха, ђим Сахйе! Ан тивĕрха!

**Сахйе.** Акă сире, акă сире! (шăпăрпа çапа-çапа иккĕшне те кăларса йараť).

## 4-МĔШ КУРĂННИ.

Сахйе пĕђђенех.

**Сахйе.** Тасарах шăласха, пĕрремĕш каттекорисен йĕрри те ан йултăр (шăлаť).

Ђаршав.

---

Хакĕ 35 пус
Цена коп.

Н. МРАНЬКОВ
ПЕРВАЯ КАТЕГОРИЯ
(Пьеса)

На чувашском языке

ЧУВАШСКОЕ ГОСУДАРСТВЕННОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО
Чебоксары, Красная площадь